CC BY


***Герасимова Алевтина Викентиевна***

старший вожатый

МБОУ «Тобурдановская СОШ им. А.И. Миттова»

с. Тобурданово, Чувашская Республика

# ВНЕУРОЧНОЕ МЕРОПРИЯТИЕ «АСАМЛĂ УЙ-ХИР» – «ПОЛЕ ЧУДЕС»

***Аннотация:*** *в статье описывается сценарий внеклассного мероприятия, посвященного традиционным чувашским женским украшениям из серебра и бисера. Обсуждается тема сохранения и передачи культурного наследия, знакомства школьников с историей национального костюма. Поднимается проблема формирования у подрастающего поколения уважения к традициям предков. В основе мероприятия лежит игровая методика, в ходе которой участники разгадывают названия старинных украшений. Особое внимание уделяется воспитательной роли занятия, направленного на расширение кругозора и сохранение этнокультурной идентичности в контексте года культурного наследия.*

***Ключевые слова:*** *сурпан-сурбан, хушпу, масмак, тевет, шӳлкеме алка-серьги.*

*Тема: Старинное женское украшение – Илемлĕ çипус эрешĕсем.*

*Чувашские украшения из серебра и бисера (7 класра ирттермелли вăйă).*

*Тĕллевĕсем:*

– ĕлĕкхи вăхăтри чăваш халăхĕн çипусĕ, капăрлăхĕ çинчен каласа парасси;

– çитĕнекен ăрăва măн асатте-асаннесен, кукаçи-кукамайсен йăли-йĕркине сыхласа хăварма пулăшасси;

– вĕренекенсен тавра курăмне вăйă урлă анлăлатасси.

*Кирлĕ хатĕрсем:* чăваш тумĕ тахăннă пуканесем, презентаци, ӳкерчĕксем, вăйă вылямалли хатĕрсем, парнесем.

*Вăйă юхăмĕ.*

Учитель: Сывлăх сунатăп сире, ачасем! Эсир пĕлетĕр ĕнтĕ кăçалхи 2026 çулта Чăваш енре- Халăхсен туслăхĕн çулталăкне, Раççей Федерацийĕнче – Раççей халăхĕсен пĕрлĕхĕн çулталăкне паллă тăватпăр. Раççейре 190 ытла халăх


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнать. Чăваш Ен Раççейĕн пĕр пайĕ. Унта 120 ытла халăх çынни пĕр килти пек пурăнать. Кашни халăх хăйĕн авалтан пыракан пуян культурине, чĕлхине, хăйне евĕрлĕ йăли-йĕркине упраса хăварас, малалла аталантарас тесе тăрăшать.

Чăваш хĕрарĕмĕсен 18–19 ĕмĕрти тумĕ хитре те кăткăс пулнă. Тум шутне тĕрлĕрен эрешсем, капăрланмалли япаласем кĕнĕ. Паян эпĕ сирĕнпе чăваш халăхĕн çипусĕ çинчен каласа парасшăн. Тимлĕ итлесе ларăр.

Чăваш халăхĕн мĕн ĕмĕрех хăйĕн тĕрри, хăйĕн çипусĕ, капăрлăхĕ пулнă.

Капăрлăх шутне мĕнсем кĕреçĕ-ши? Хăлха çаккисем, çуç-çивĕт капăрлатмаллисем, кăкăр-çурăм хыç çаккисем, пилĕк çыххи. Халĕ вара ĕлĕкхи чăваш çипусне халалласа «Асамлă уй-хир» вăйă ирттеретпĕр. Вăйă виçĕ туртан, финалтан тата хушма вăйăран тăрать.

Пĕрремĕш тур ирттерме виçĕ вылякан кирлĕ.

(Ачасене 1, 2, 3, 0 числосем çырнă хутсем валеçсе паратăп Кама 1 число лекнĕ, çавсем выляма тухаççĕ).

Учитель: Акă пирĕн 1-мĕш турта вылякансем паллă пулчĕç те. Тархасшăн, малалла тухса хăвăр вырăна йышăнăр.

*1-мĕш турта вылякансене панă ĕç.*

Женская головная повязка в форме узкого полотенца с вышитыми концами? *(Сурпан-сурбан).*

Таблица 1

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| с | у | р | п (б) | а | н |

(Вăййа хутшăнакан ачасем черетпе сас паллисем каласа тĕрĕс хурав тупаççĕ. Сăмахне чи малтан тавçăракан финалта вылять.)

Учитель: Маттур, ачасем! Малалла кайăпăр. 2-мĕш тур ирттерме тата виçĕ вылякан кирлĕ. (Кама «иккĕ» число лекнĕ, çавсем выляма тухаççĕ).

Акă пирĕн 2-мĕш турта вылякансем паллă пулчĕç те. Тархасшăн, малалла тухса хăвăр вырăна йышăнăр.

*2-мĕш турта вылякансене панă ĕç.*


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Старинный женский головной убор, украшенный монетами?

Таблица 2

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| х | у | ш | п | у |

*(Вăййа хутшăнакан ачасем черетпе сас паллисем каласа тĕрĕс хурав тупаççĕ. Сăмахне чи малтан тавçăракан финалта вылять.)*

Учитель: Маттур, ачасем! Малалла кайăпăр. 3-мĕш тур ирттерме татах виçĕ вылякан кирлĕ *(Кама «виççĕ» число лекнĕ, çавсем выляма тухаççĕ).*

Акă пирĕн 3-мĕш турта вылякансем паллă пулчĕç те. Тархасшăн, малалла тухса хăвăр вырăна йышăнăр.

*3-мĕш турта вылякансене панă ĕç.*

Старинный девичий головной убор, заостренным верхом, обшитый бусами и серебрянными монетами?

Таблица 3

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| т | у | х | ь | я |

*(Вăййа хутшăнакан ачасем черетпе сас паллисем каласа тĕрĕс хурав тупаççĕ. Сăмахне чи малтан тавçăракан финалта вылять).*

*Финалта вылякансене панă ĕç.*

Название головного украшения замужних женщин в виде вышитой ленты?

Таблица 4

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| м | а | с | м | а | к |

Учитель: Маттур! Çĕнтерӳçĕсене ал ăстисем хатĕрленĕ япаласене парнелетпĕр. Паянхи вăйă питĕ аван иртрĕ. Пурте хастар пултăр. Кашни вылякана – асăнмалăх парне.

*Куракансем валли ыйтусем (игра со зрителями).*

1. Женское украшение-унизанная монетами и бисером лента, надевавшаяся через плечо (Тевет).

*2.* Старинное нагрудное женское украшение из мелких бус и монет *(Шӳлкеме).*



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

*3.* Женское височное украшение из монет *(Алка-серьги)*.

Учитель: Паянхи вăйăра выляса эсир хăвăр пĕлĕвĕре кăтартрăр. Сире пурсăра та саламлатăп тата малашне те ăнăçу сунатăп!

*Пĕтĕмлетӳ.*

Учитель: Эпир халĕ те ку япаласемпе усă куратпăр. Уявсенчи, концертсенчи çынсем çинче вĕсене курма пулать. Пирĕн çак япаласене манăçа кăларас марччĕ. Ăруран ăрăва упраса хăварасчĕ.

***Список литературы***

1. Жачева Е. Черты самобытности / Е. Жачева // Чувашская вышивка: техника, приемы. – Чебоксары, 2006. – С. 32–42.

2. «Асамлă уй-хир» (7–9 классенче irттермелли вăйă). – URL: https://shkul.su/files/000000145.docx (дата обращения: 16.03.2026).



Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)